стремилась прививать эти качества школьникам. Всемерно помогала в приобретении школьникам музыкальных инструментов и успешной работе кружка по музыке.

А. Н. Ухваркина заслуженно пользовалась большим авторитетом среди учителей Шемуршинского района и республики, учащихся и их родителей.

Родилась Анна Николаевна в апреле 1925 года в семье крестьянина дер. Чепкас-Ильметьево Шемуршинского района. Окончила заочно в 1949 году физико-математическое отделение Казанского учительского института.

19 мая 1986 года Анны Николаевны не стало... Но учитель с большой буквы вечно будет жить в сердцах ее учеников. Ее славное имя бессмертно.

### *УХТИЯРОВ ИЛЬЯ ИЛЬИЧ (1956—1994)*



Илья Ильич Ухтияров. Таса чунлă юрист. Кĕрнеклĕ те йăрăс кĕлеткеллĕ каччă. Ырă кăмăллă та ăслă çын.

Куç умĕнчен каймасть унăн çутă сăнарĕ. Поэт чунлă çынччĕ вăл. Сăвăсем çыратчĕ. Юмах-халап, такмаксем пухатчĕ. Лайăх спортсменччĕ. Ĕç тума тытăнсан вара пĕтĕм вăй-халне паратчĕ. Студентсемпе колхоза çĕрулми пухма кайсан, икĕ-виçĕ çыншăн ĕçлетчĕ. Тĕрĕслĕхшĕн кĕрешетчĕ. Çак туйăм питĕ вăйлă пулнипех ĕнтĕ вăл пурнăçĕнче хăйне валли тĕрĕс специальность, пархатарлă професси суйласа илнĕ. Прокуратура системинче 15 çула яхăн ĕçленĕ. Пĕрремĕш каслă юрист. Çар званийĕ те пур — капитан.

Ильяпа шăпах 21 çул каялла, 1974 çулхи çурла уйăхĕнче, паллашрăм. Эпĕ ун чухне Хусанти университетра журналистика кафедринче ĕçлеттĕм. Вăл юридици факультетне вĕренме кĕчĕ. Çав вăхăтрах хăйĕн сăввисемпе паллаштарчĕ, мĕнле ĕмĕт-шухăшпа пурăнни çинчен каласа пачĕ. Часах эпир ăна Тутарстан писателĕсен Союзĕнчи

чăваш секцийĕн членне илтĕмĕр. Пĕр ларура унăн творчествăри ĕçне-хĕлне пăхса тухса, малашлăх валли чылай сĕнӳ патăмăр.

Пĕррехинче унран çапла ыйтрăм:

— Эсĕ сăвăç чунлă çын-çке! Мĕншĕн-ха юридици факультетне суйласа илтĕн?

— Çеçпĕл тĕслĕхĕпе. Çулăмлă Çеçпĕл Мишши судпа следстви органĕсенче ĕçленĕ-çке. Таса чунлă юрист пулнă.

Ашшĕ — тĕне кĕмен чăваш Ильяс Илендеевич, çав тери ĕçчен хресчен. Ирĕксĕрлесе колхозсем йĕркеленĕ вăхăтра пысăк терт курнă, ăна чутах кулак тесе айăпламан, пысăк налуксем хурса асаплантарнă. Анчах Ильяс авăнман, хуçăлман. (Вăл, Аслă вăрçă инваличĕ, 81 çитнĕскер, юридици енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ хăйĕн виçĕ ывăлĕ — Николай, Анатолий тата Илья çинчен каласа пачĕ мана).

Хусанти университета кĕриччен Илья Ильич пĕр çул хушши Шăмăршă район хаçатĕнче ĕçленĕ. Фотокорреспондент пулнă. Яваплă секретарь ĕçĕсене тунă.

Юридици факультетĕнче вĕренекен студентсен общежитийĕнче тăтăшах пулаттăм. Илья Ухтияров пурăнакан пӳлĕмре студентсемпе чылайччен калаçса ларнă эпĕ. Иккĕн çеç юлсан, литература ыйтăвĕсене хускатнă май, пĕр-пĕрин хайлавĕсене вуласа-сӳтсе яваттăмăр.

Вăл виççĕмĕш курс пĕтерсе тăваттăмĕшне куçнăччĕ ĕнтĕ. Пĕтĕмпех «пиллĕксемпе» вĕренсе пыратчĕ, хĕрлĕ диплом илмелли кандидатчĕ. Практика программине питĕ лайăх пурнăçласа пыратчĕ. Пĕррехинче филологи, илемлĕ литература, журналистика ыйтăвĕсемпе ытларах кăсăкланса кайрĕ те çапла каласа хучĕ:

— Эпĕ историпе филологи факультетне заочнă йĕркепе вĕренме кĕресшĕн.

Ырларăм ун шухăшне. Хамăр факультет пуçлăхĕсемпе калаçрăм. Ку сĕнӳпе пурте килĕшрĕç.

Обществăлла наукăсемпе малтан панă экзаменсене шута илчĕç те, ăна журналистика уйрăмне тӳрех виççĕмĕш курса йышăнчĕç. Ятарлă предметсемпе мана экзаменсем пачĕ. Юридици факультетне хĕрлĕ дипломпа вĕренсе пĕтерсен, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи прокуратурăра следовательте ĕçлеме пуçларĕ. Çав вăхăтрах журналистика уйрăмĕнче заочнă вĕренсе пычĕ.

Вăл журналистика факультетĕнче вĕреннĕ чухне (1978—1984 çç.) эпĕ Сĕнтĕрвăрринче час-часах пулаттăм. Ăна, тин çеç юрист дипломне илнĕскере, ытла та кăткăс ĕçсем хушатчĕç, çав тери тискер преступленисене тĕпчесе

ич. Ӳнер ăстаçи тунă сăнӳкерчĕк тăрăх тепĕр кунне çын вĕлерекене шыраса тупаççĕ. Майăн 17-мĕшĕнче 17 сехетре следователь А. Яковлева допрос тума пуçлать. Кĕске тапхăрта «ĕçе» вĕçлесе суд аллине парать. Йывăр преступление питĕ хăвăрт, талăк çурăра тупса палăртнăшăн республика прокурорĕ И. Ухтиярова приказпа тав тăвать, укçан преми парать.

Илья Ильич мăшăрланманччĕ-ха. Тату та тĕлейлĕ çемье йĕркелес ĕмĕтпе çӳренĕ май хăйĕн пулас «тĕпренчĕкне» утьăкка тумалли сăпка юрри те хайласа хунăччĕ.

Аслă тĕнче варринче
Аттепеле анне пур.
Атте-анне килĕнче
Юп курмалăх ырлăх пур.
Ачине, паппине,
Юп курмалăх ырлăхне.

Мĕнле хитре те ăслă калаçатчĕ вăл! Илья Ильич халăх умĕнче, суд залĕнче, радиопа калаçнине нумай хут итленĕ эпĕ. Чăвашла епле хитре юрлатчĕ вăл тата! «Алран кайми аки-сухи...». Хăйĕн юратнă ĕçне алран кайми аки-сухи тесе шутлатчĕ вăл... «Хĕл кунĕсенче хресчен аллинчен каять-ха суха пуçĕ, — хушса хуратчĕ час-часах. — Пирĕн вара яланах — çулла та хĕлле те, кăнтăрла та, çĕрле те — пĕр вĕçĕмсĕр «алран кайми аки-сухи».

Анчах çамрăк та пултаруллă юриста вилĕм çави вăхăтсăрах çулса пăрахрĕ. Ăна хăй çуралнă ялта, Виçпӳрт Шăмăршăра, пытарчĕç. Хурçă тĕслĕ палăк çинче çапла палăртнă: «2.08.56 — 28.08.94 Санăн ырă кăмăлу нихăçан асран каймĕ».

Пирĕн Илле тусăмăр Çеçпĕле питĕ хисеплетчĕ, юрататчĕ, ун пек пулма тăрăшатчĕ. Çĕçпĕл Мишшин çак сăмахĕсем ăна та тӳрреммĕнех тивĕçеççĕ пек туйăнать:

Çывăр, тăван, иртрĕ ĕмĕрӳ...
Вăхăтсăрах тухрĕ сан чуну.
Анчах çăмăл пултăрччĕ тăпру,
Канлĕ пултăр нӳрĕ вырăну!

Константин ПЕТРОВ,
писатель, доцент.